26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 ИЮНЬ 6 ВЫРСАРНИКУН 117(6354) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕТĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне илмесĕр пĕр ĕççынни те ан юлтăр!

Çураки вăхăтĕнче пысăк ĕç тухăçлăхĕ тата лайăх пахалăх кăтартса ĕçленĕшĕн, ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

Сĕнтĕр районĕ тăрăх:

133. **„Новый путь" колхоз** (колхоз председателĕ Гаврилов юлташ, колхозри пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Кириллов** юлташ). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 6 кун хушшинче туса пĕтерне. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 12 гектар акса хăварнă. 1-мĕш бригада (бригадирĕ **М. П. Алексеев** юлташ) пуринчен лайăх ĕçленĕ, вăл 4 кунта акса пĕтернĕ. Акакансем **Федорова, Артемьева, Никитина, Мамутина,** 13 ретлĕ сеялкăпа ĕçлесе, нормăна куллен 130—140-шер процент тултарса пынă. 1-мĕш бригадăра **Петрова, Антонова, Гаврилова, Тихонова, Петрова** сухаçăсем, 2-мĕш бригадăра Максимова, 3-мĕш бригадăра **Калошина,** Алексеева, 4-мĕш бригадăра **Вашурова,** 5-мĕш бригадăра **Лукоянова** сухаçăсем нормăна кунсеренех 120—130 процент тултарса ĕçленĕ.

134. **„Свобода" колхоз** (колхоз председателĕ Петровский юлташ, кандидатсен группин парторгĕ **Тямков** юлташ). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 6 кун хушшинче туса пĕтернĕ. Оборона фончĕ валли планран ирттерсе 9 гектар акса хăварнă. Пуринчен лайăх 5-мĕш бригада (бригадирĕ **М. Краснова** юлташ) ĕçленĕ. Вăл 5 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Çураки ĕçĕнче **П. Кириллова** тата **А. Замятин** акакансем уйрăмах палăрнă, вĕсем нормăна кунсеренех 178—200 процент тултарса пынă. **М. Ириков, А. Курмандов, Е. Иванов, А. Иванова** сухаçăсем кулленхи нормăна 120—145 процент тултарса пынă.

Отечественнăй аслă вăрçăн Иккĕмĕш Заемĕ

ССР Союзĕн Правительстви Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне кăларасси çинчен постановлени йышăнчĕ. Çак хыпара пĕтĕм совет халăхĕ пĕр кăмăллă пулса, тулли хавасла кĕтсе илчĕ. Правительство пĕлтерĕвне итленĕ хыççăнах миллионшар совет ĕççыннийĕсем—рабочисемпе служащисем, совет интеллигенцийĕ хăйсен чĕрисенчи туйăмсене, хăйсен патриотла шухăш-кăмăлĕсене пĕлтерме митингсене пухăнчĕç.

— Эпир кивçен паракан укçа-тенкĕпе тăван çĕршыв фронта çĕнĕ танксемпе бронепоездсем, самолетсемпе карапсем, тупăсемпе миномётсем туса ăсаттăр!—терĕç советăн сулăмлă патриочĕсем.

— Ылханлă нимĕç захватчикĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкассишĕн, ирĕклĕ Совет çĕрне ылхавлă тăшманран тасатассишĕн эпир хамăрăн пурнăçпа кунçулăмăра хĕрхенмесĕр кĕрешетпĕр, çĕнĕ заема пысăк хавхаланупа çырăнатпăр,—терĕç совет воинĕсем. Тылри ĕççыннисем эсир те çак чыслă ĕçшĕн хăвăрăн мĕнпур вăйсене, укçа-тенкĕсене шеллесе ан тăрăр!

Заема вырнаçтарас ĕçĕн малтанхи ик-виçĕ сехечĕ хушшинчех совет ĕçĕн ... çыннисем государствăна хăйсен уйăхри е уйăх çурăри ĕç укçисене кивçен пачĕç. Колхозлă ялăн сассилĕ те, танксемпе самолетсем тума укçа-тенкĕ хывнă чухнехи пекех, хăватлăн янăрарĕ. Пиншер колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем нумай вăхăт хушши перекетлесе усранă укса-тенкĕсене çĕнĕ заема туянма пачĕç. Отечественнăй вăрçăн Иккĕмĕш Заемне вырнаçтарас ĕç республикăра патриотла пысăк çĕкленӳпе пуçланчĕ. Красноармейски районри «Сила» колхоз членĕсем пĕр-икĕ сехет хушшинчех çĕнĕ заема 160.000 тенкĕлĕх çырăнса укçине те çийĕнчех тӳлерĕç. Вăл шутран колхоз председателĕ Андрей Павлов çĕнĕ заема 100.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех тӳлерĕ. Кун пек примерсем республикăра ӳссех пыраççĕ.

Красноармейски МТС-ĕнчи паллă трактористсем В. Герасимов, В. Гаврилов, С. Михайлов, И. Владимиров юлташсем заема кашниех 50.000-шер тенкĕлĕх çырăнса укçине те çийĕнчех хыврĕç.

Çĕнĕ заема 25.000, 20.000 тата 15.000 тенкĕлĕх çырăнса укçине те çийĕнчех тӳленĕ колхозниксемпе колхозницăсем республикăра вуншарăн шутланаççĕ. Заема вырнаçтарас ĕçре партипе совет тата комсомол активĕ лайăх примерсем кăтартать. Тăван çĕршыв умĕнчи патриотла тивĕçе туйса тăрса, рабочисемпе служащисем, пирĕн интеллигенци отечественнăй вăрçăн Иккĕмĕш Заемне 2—3 уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăнаççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри рабочисем пурте тенĕ пекех хăйсен ик-виçĕ уйăхри ĕç укçине государствăна кивçен пама кăмăл турĕç. Шупашкарти пир-авăр фабрикинчи мастер, РКП(б) членĕн кандидачĕ Зилова юлташ заема уйăхри ĕç укçин 210 процентĕ чухлĕ çырăнчĕ. Инструктор Сеналкина, уйăхра 360 тенкĕ илекенскер, заема 2.000 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Çĕмĕрлери леспромторг конторĕнче ĕçлекенсем уйăхри ĕç укçи фондĕнчен ... çырăнса, малтанхи кунах 9.000 тенкĕ пухнă. Унти работницăсем—эвакуаци йĕркипе килнĕ Тимошенко, Пугленкова юлташсем 4-шар уйăхри ĕçукçи чухлĕ заем туянма çырăнчĕç. Сорокин юлташ заема хăйĕн 5 уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăнчĕ.

Совет халăхĕ заемсене çулсеренех пысăк ăнăçлăхпа вырнаçтарать. Пирĕн çĕршыври халăхсем заем çырăнса илсе хăйсем Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕтĕссе тăнине, Хĕрлĕ Çара вĕçĕмсĕр юратнине ӳссĕн кăтартса параççĕ.

Государствăн 1942 çулхи Военнăй Заемне тăван çĕршывра, çавăн пекех пирĕн республикăра та ăнăçлăн вырнаçтарнă. Колхозниксемпе единоличниксем заем укçине çийĕнчех тӳлесе татнă. Республикăри ĕççыннисем государствăн 1942 çулхи Военнăй Заемне пĕтĕмпе 67 миллион тенкĕлĕх çырăнса илнĕ. Вăл заема тăван çĕршывра пĕтĕмпе 13 миллиард тенкĕлĕх сарнă.

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне 12 миллиард тенкĕлĕх 20 çуллăха кăларнă. Пĕр иккĕленӳ те çук, ку заема та тăван çĕршыври ĕççыннисем хăвăрт та ăнăçлăн вырнаçтарĕç. Çĕнĕ заем—пирĕн çĕнтерӳ хăвăртлатакан заем! Ăна çырăнасси—кашни совет гражданинĕн патриотла тивĕçĕ пулса тăрать.

Республикăри ĕççыннисем танксемпе самолетсем тума 82 миллион тенкĕ укçа хыврĕç, Хĕрлĕ Çар фондне 120 пин пăт тырă пачĕç. Çак ĕçшĕн пирĕн юратнă полководец аслă Сталин чăваш халăхне икĕ хутчен саламларĕ тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав турĕ. Чăваш ĕççыннисем Хĕрлĕ Çарăн пĕр дивизине тăхăнтармалăх ăшă тумтир, икĕ дивизи валли çăматă, мулаххайсем пухрĕç т. ыт. те.

Халăх Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа пулăшса тăма тăрăшать. Танксемпе самолетсем тума çĕршер пин тенкĕ укçа хывнă чăваш ĕççыннийĕсен—Михаил Владимирович Дубровин, Андрей Михайлович Сарсков, Андрей Федорович Пугачев Минаев тата ытти юлташсен мухтавлă ячĕсене тăван çĕршыв ĕмĕр-ĕмĕр асра тытса пурăнĕ. Вĕсен пархатарлă ĕçĕ хальĕ, çĕнĕ заема вырнаçтарнă чухне, республикăри ĕççыннисене патриотла ĕç тума хавхалантарать.

Иккĕмĕш Военнăй Заема вырнаçтарас ĕç уйрăмах республика столицинче, Шăхасан, Калинино, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри, Вăрнар районсенче организованно пырать. Шупашкар ĕççыннийĕсем иртнĕ çул малтанхи кун заема 3 миллион та 418 пин тенкĕлĕх çырăннă пулсан, кăçал 9 миллион та 672 пин тенкĕлĕх çырăннă. Калинино районĕнчи ĕççыннисем пĕр кун хушшинче çĕнĕ заема 4 миллион та 334 пин тенкĕлĕх сарса, укçине 3 миллион та 642 пин тенкĕ пухрĕç. Малтанхи кун республикăра çĕнĕ заема 95 миллион та 836 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă, вăл шутран 50 миллион тенкĕ ытла укçине те пухнă.

Заемăн çитĕнĕвĕ пысăк. Пур çĕрте те тенĕ пекех заема çырăннă хыççăнах укçине те пухма тытăннă.

Çĕнĕ заема организованно вырнаçтарса, Чăваш республикинчи ĕççыннисем хăйсен патриотизмне, фронтпа тыл пĕрлĕхлĕ пулнине, ылханлă тăшмана çĕнтерес ĕçшĕн нимĕне те шеллесе тăманнине тепĕр хут кăтартса параççĕ.

Заема илме мĕнпур ĕççыннисене явăçтармалла. Çакă вăл партипе комсомол тата профсоюз организацийĕсен, комсодсен, заем уполномоченнăйĕсен, хуласемпе ялсенчи пĕтĕм общественноçăн хальхи вăхăтри питех те пысăк задачи пулса тăрать. Заема вырнаçтарнипе пĕр вăхăтрах унăн укçине те хăвăрт пухас пулать.

Çĕнĕ заемăн пĕлтерĕшĕпе условийĕсем çинчен ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăх организацилени çĕнĕ заема вырнаçтарас ĕçĕн ăнăçлăхне татса парать.

Иккĕмĕш Военнăй Заемăн облигацийĕсене илмесĕр пĕр çын та ан юлтăр.

Фронта пулăшасси—пирĕн чыслă ĕç

ТĂВАЙ, июнĕн 5-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне пĕр кун хушшинче районĕпе 2.300.000 тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран 2 миллион тенкĕ укçине тӳленĕ.

«Сталь» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 90.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тӳлерĕç. Колхоз хăй 20.000 тенкĕ çырăнчĕ. Колхоз председателĕ Васильев юлташ 5.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çавăнтах пачĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозра çĕнĕ заема 240.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине пĕтĕмпех пухнă. Колхоз председателĕ Д. Григорьев — отечественнăй аслă вăрçă инвалиджĕ 10.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех парса татрĕ. «Красная Чувашия» колхоз 50.000 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Колхоз членĕсем хушшинче 220.000 тенкĕ сарнă. Укçине пĕтĕмĕшпех парса татнă. Овощевод-бригадир Т. Васильев юлташ 10.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çав вăхăтрах хыврĕ. 73 çулхи колхозник Н. Васильев юлташ 500 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Укçине те парса татрĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи заема вырнаçтарас ĕç пур колхозсенче те патриотла пысăк çĕкленӳпе пырать. Акă, «Комсомол» колхозри 59 çулхи колхозник Г. Тимофеев юлташ çĕнĕ заема çырăнса, митингра çапла каларĕ:

— Манăн ывăлсем фронтра çапаçаççĕ. Эпĕ колхозра мĕнле ĕçленине хăвăр та куратăр. Фронта пулăшасси—пирĕн чыслă ĕç. Çавна асра тытса, эпĕ çĕнĕ заема 3.000 тенкĕлĕх çырăнатăп,—терĕ вăл укçине сĕтел çине хурса.

Халĕ пур учрежденисемпе колхозсенче те заема малалла сарас тата укçине çийĕнчех парса татас ĕç ăнăçлăн пырать.

А. САЛМИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пысăк хавхаланупа çырăнаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Июнĕн 5-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Правительство çĕнĕ заем кăларнине районри ĕççыннисем пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Пур çĕрте те кĕске митингсемпе пухусем пулса иртрĕç. Районра çĕнĕ заема пĕр кун хушшинче 2.280.495 тенкĕлĕх сарнă. 1.157.000 тенкĕ укçине пухнă.

Советски ялсоветне кĕрекен колхозсем 280.850 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех хыврĕç.

«Новая жизнь» колхоз 55 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех парса татнă. Колхоз председателĕ Ефремов юлташ 10 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине те парса татрĕ.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн Президиумĕ йышăннă постановлени

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне çырăнас ĕçе профсоюз организацийĕсем хутшăнасси çинчен

ССР Союзĕн Правительстви Государствăн иккĕмĕш Военнăй Заемне кăларчĕ. Çав заемран илнĕ укçа-тенкĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çапла аркатассине хăвăртлатас тата оккупантсенчен ирĕке кăларнă районсенчи халăх хуçалăхне юсаса йĕркене кĕртес ĕçе каять.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕн Президиумĕ профсоюзсен мĕнпур организацийĕсене —союзсен Центрĕсене, облаçсенчи (крайсенчи) комитечĕсене, фабрикăсемпе заводсенчи тата вырăнти комитетсене Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне рабочисемпе служащисем тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисем хушшинче çырăнса ирттерес ĕçе активлăн хутшăнма хушать.

Ĕççыннисен пысăк патриотизмĕ, вĕсем тăшмана хăвăртрах çĕнтерес ĕçе хăйсен мĕнпур шухăш-кăмăлĕсене пăхăнтарма хатĕр тăни халăха Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне çырăнса ирттерес ĕçе анлăн хутшăнма хавхалантарĕ.

Заема мĕнле тӳллевне кăларнине тата вăл мĕнле вырăн йышăнса тăнине ăнлантарса парса, профсоюз организацийĕсен, заема ирĕклĕн çырăнас йĕркене çирĕп тытса пырса, мĕнпур ĕççыннисене заема хăйсен 3—4 эрнери ĕç укçи чухлĕ çырăнтарассине пурнăçа кĕртмелле.

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ ССР Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисене заема çырăнса илме чĕнет. Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне пĕр шухăшпа-кăмăллăн çырăнса илсе, пĕтĕм халăхăн пĕрлĕхне тата СССР Союзĕнчи ĕççыннисем Ленин—Сталин партийĕ тавра, Совет Правительстви тавра тачă пĕтĕссе тăнине, тăшмана çĕнтерес куна çывхартас тесе хамăрăн мĕнпур вăйсемпе средствăсене пама хатĕр тăнине кăтартар.

Йăлтах фронт валли, йăлтах тăшмана çапса аркатас ĕç валли йăлтах çĕнтерӳ тунă çĕре!

ÇĔНĔ ЗАЕМА САРАС ĔÇ РЕСПУБЛИКĂРА МĔНЛЕ ПЫРАТЬ

Иккĕмĕш Военнăй Заема сарас ĕç республикăра ăнăçлăн пулса пырать. Июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕм республикипе заема 108.109.000 тенкĕлĕх сарса, укçине 64.091.000 тенкĕ пухнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче—27.881.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 795.000 тенкĕ хывнă. Колхозсемпе артельсенче—80.219.000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине 63.296.000 тенкĕ пухнă.

Иккĕмĕш Военнăй Заема сарас ĕç уйрăмăнах Шăхасан, Калинино, Элĕк, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче аван пырать. Шăхасан районĕнче заема 3.252.000 тенкĕлĕх сарса, укçине пĕтĕмпех хывнă, Калинино районĕнче 3.870.000 тенкĕлĕх сарнă, укçине 3.852.000 тенкĕ пухнă, Элĕк районĕнче 2.889.000 тенкĕлĕх сарса, укçине 2.887.000 тенкĕ пухнă, Сĕнтĕрвăрри районĕнче 2.737.000 тенкĕ сарнă, вăл шутран укçине 2.134.000 тенкĕ хывнă.

Çĕнĕ заемăн пысăк çитĕнĕвĕ

ÇĔМĔРЛЕ, июнĕн 5-мĕшĕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Хулари ĕççыннисем хушшинче Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне малтанхи кунăн иквиçĕ сехечĕ хушшинчех вырнаçтарса пĕтернĕ. Чылай предприятисемпе учрежденисем заема уйăхри ĕçукçи фондĕнчен нумай ирттерсе çырăннă.

Чăвашторгăн Çĕмĕрлери отделенийĕнче обществăллă апатлану енĕпе ĕçлекенсем заема ĕç укçи фончĕн 143 процентĕ чухлĕ, леспроторгра ĕçлекенсем ĕç укçин 200 процентĕ чухлĕ çырăннă.

Леспроторгра ĕçлекенсем заема 50.725 пин тенкĕлĕх çырăнса малтанхи кунах 9.000 тенкине пухрĕç. Унта ĕçлекенсем—эвакуаци йĕркипе килнĕ Тимошенко, Пугленко юлташсем кашниех 1000-шер тенкĕлĕх çырăннă. Çакă вăл вĕсен тăватă уйăхри ĕç укçи чухлĕ пулать. Сорокин юлташ 1.500 тенкĕлĕх—пилĕк уйăхри ĕç укçи чухлĕ çырăннă.

Çавăн пекех заема леспромхоз, больница коллективĕсем те уйăх çурăри ĕç укçи фончĕ чухлĕ çырăнчĕç.

Районĕпе малтанхи кунах заема бюджетра палăртнă суммăран ирттерсе вырнаçтарнă. Рабочисемпе служащисем 1.144.000 тенкĕлĕх, ялти ĕççыннисем 1.500.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсем 131.000 тенкĕлĕх çырăнчĕç. Çапла вара заема районĕпе пурĕ 3.775.000 текĕлĕх вырнаçтарса укçине 1.000.287 тенкĕ пухнă.

Х. ЛИСИН.

Хамăрăн тăван çĕршыван хăватне тĕрекленетсех пырăпăр

Государствăн Иккĕмĕш Военнăй Заемне кăларни çинчен радио тăрăх пĕлтернине Калинино районĕнчи Айкăш ялсоветĕнчи мĕнпур ĕççыннисем калама çук пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Вĕсем правительство решенийĕ çине çĕнĕ заема пĕр харăссăн çырăнса илнипе ответлерĕç. Ялсоветĕнчи ĕççыннисем Военнăй Заема пĕтĕмпе 169.500 тенкĕлĕх çырăнса, укçине те пĕтĕмĕшпех тӳлесе татрĕç. Çапла вара вĕсем хăйсем тăван çĕршыва тата аслă Сталина хĕрӳллĕн юратса, чĕререн парăнса тăнине тепĕр хут кăтартса пачĕç. Хăйсем перекетлесе хăварнă укçана заем илме парса, колхозниксемпе колхозницăсем тата единоличниксем çапла каларĕç:

— Çак укçа-тенкĕ хăвăртрах хăватлă танксем, орудисем, самолетсем пулса тăтăр, çапла майпа фашистла ирсĕрсене хăвăртрах çĕмĕрсе тата пĕтерсе тăкма пултăр Хĕрлĕ Çара пулăштăр.

Эпир малашне те кашни харпăрхăй вырăнĕнче хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр ĕçлĕпĕр, хамăрăн тăван çĕршывăн вăй-хăватне тĕреклетсех пырăпăр.

Калинино районĕнчи Айкăш ялсовет исполкомĕн председателĕ П. АНАНЬЕВ.
Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ И. НИКОЛАЕВ.
«Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ И. КАПИТОНОВ.

Республикăн столицинче

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче Государствăн Иккĕмĕш Военнăй заемне вырнаçтарас ĕç ăнăçлăн пырать. Ĕнерхи кун тĕлне хулари ĕççыннисем хушшинче заема мĕнпурĕ 9 672-000 тенкĕлĕх сарнă.

* * *

Чăлха фабрикинче ĕçлекенсем хушшинче заема ĕçукçа фончĕн 137.1 проценчĕ чухлĕ çырăннă. Малта пыракан работницăсем: Петрова, Бабич, Адрианова, Малкина, Виноградова юлташсем икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ çырăннă.

Çĕнĕ заема çырăнас ĕç вузсенче те ăнăçлăн пырать. Ялхуçалăх институтĕнчи вĕрентекенсемпе вĕренекенсем хушшинче ку ĕç пысăк активлăхпа пулса иртрĕ. Ефрейкич доцентпа Пельцих профессор 3-шер пин тенкĕ, Найденко, Тураев юлташсем 2.300-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç. Вĕрентекенсем хушшинче 2 пин тенкĕрен кая çыранакансем пулмарĕç. Вĕренекенсенчен Кириллова юлташ 600 тенкĕ, Бочкова, Краснова юлташсем 500-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 4-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чăссем 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра пирĕн боецсем нимĕç оборонин малти хĕрринчи çапă купине вут тивертнĕ. Нимĕç салтакĕсем пушара сӳнтерес тесе траншейăсенчен тухсан, пирĕн снайперсем 20 нимĕçе ытла вĕлернĕ. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçура 2 нимĕç самолетне персе ӳкернĕ. Тăшманăн пĕр самолетне пирĕн зенитнăй артиллери пĕтерсе тăкнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирĕн артиллери миномётсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, 3 автомашинăна тата боеприпассем тиенĕ темиçе лава çĕмĕрсе тăкнă. Пĕр чăсăн снайперĕсем 44 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Лисичанск районĕнче тăшман Çурçĕр Донец урлă лодкăсемпе каçма хăтланнă. Пирĕн боецсем, пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе, гитлеровецсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллери нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, тăшман пехотине икĕ рота таран сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисем тăшманăн 7 дзотне тата 5 землянкине ишĕлтерсе антарнă, нимĕç танкне çунтарса янă, пĕр орудине пĕтерсе тăкнă, 100 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Снайпер кĕçĕн сержант Иван Гаев, броньăна шăтаракан тата вут тивертекен пульăсемпе персе, тăшман артиллерине ăçта пемеллине кăтартса тăракан аэростата вут тивертнĕ. Çав аэростатăн гондолĕнчи нимĕç наблюдательне вĕлернĕ.

* * *

Барановичи облаçĕнчи районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен Чкалов ячĕпе тăракан отрячĕ юлашки вăхăтра нимĕçсен 5 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Крушенипе пула танксем тиенĕ темиçе платформа çĕмĕрëлнĕ тата горючи тултарнă 11 цистерна çунса кайнă. Шоссе çулĕсем çинче засадăсенчен персе 60 гитлеровеца вĕлернĕ. Чапаев ячĕпе тăракан отрядри партизансем тăшман колоннине аркатса тăкнă. Нимĕçсен 28 салтакне тата 5 офицерне вĕлернĕ. Партизансем тăшмантан 28 винтовка, пĕр пулемет, 2 автомат, темиçе пин патрон, гранатăсем тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 383-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 531-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак, словен Станислав Л. çапла каласа панă: «Нимĕç оккупанчĕсем словенсене ытла та хаяррăн хĕстереççĕ, мăшкăллаççĕ. Пире хамăр чĕлхепе калаçма чарнă. Оккупантсем пирĕн шкулсемпе чиркӳсене хупрĕç. Сараево хули патĕнче çул тунă çĕрте словенсен тытса хупнă нумай деятелĕсем, писателĕсем, учителĕсем, пупĕсем ĕçлеççĕ. Çавăнтах Максау ялĕнчи 60 çулхи пуп Шегола ĕçлет. Партизансемпе кĕрешес сăлтавпа гитлеровецсем мирлĕ çынсене вĕлереççĕ, ялĕ-ялĕпе хăйсен вырăнĕнчен хăвалаççĕ, çĕр ĕçлекенсенчен вĕсен хуçалăхĕсене тытса илеççĕ. Нумаях пулмасть Петтау районĕнче оккупантсем темиçе çĕр çынна персе пăрахнă. Словенире нимĕç чиновникĕсем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе пырса тулнă. Вĕсем нимĕç салтакĕсемпе пĕрле хресченсене çаратаççĕ, çĕршыва тустараççĕ. Словенецсем нимĕç çарне каясшăн мар, анчах та вĕсене ирĕксĕр мобилизацилеççĕ. Гитлеровецсем эпир вĕсене курайманнине пĕлеççĕ. Нимĕçсен çара хăйсен тăшманĕсене илме тивет пулсан, вĕсен ĕçĕсем начар пулмалла вара. Маршевăй батальонра 100 словенецран кая мар пулнă. Фронта кайнă чухне эпир май килсенех вырăссен енне куçма калаçса татăлтăмăр».

* * *

Демянск хулине оккупациленĕ вăхăтра темиçе рет йĕплĕ пралук карса çавăрăннă шурлăхлă участокра нимĕçсем тыткăна лекнĕ красноармеецсемпе мирлĕ совет граждăнĕсене хупма лагерь тунă. Çав лагерьте нимĕç бандичĕсем темиçе çĕр совет çыннине выçăхтарса асаплантарса тата персе вĕлернĕ. Печник Александр Карпов çапла каласа парать: «Нимĕçсем хăйсен аллине лекнĕ çынсене вĕлериччĕнех хĕнетчĕç, асаплантаратчĕç. Вĕлернисен ӳчĕсене гитлеровецсем лагерьтен инçех мар вырăнти траншейăсене пăрахса хăварса хуратчĕç». Çак кунсенче медицина комиссийĕ умĕнче пĕр виллĕ шăтăкне чавса пăхнă. Çав шăтăкран нумай виллĕ туртса кăларнă. Лагерь районĕнче йышлă виллĕ пытарнă шăтăксем мĕнпурĕ 27 шăтăк тупнă.

Июнĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр соединенин артиллеристчĕсем нимĕçсен 7 дзотне аркатнă, противникăн темиçе автомашинине пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем противникăн боевой охраненине пĕтерсе тăкса, нимĕçсем çирĕплетнĕ çӳллĕ вырăна тытса илнĕ. Тыткăна илнисем тата трофейăсем пур. Пĕр чăсри снайперсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнчи участоксенчен пĕринче пĕр чăсăн боецĕсем вырăнти çапăçусем туса пынă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 2 орудине пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне яхăн вĕлернĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра противник пехотин пĕр роти пирĕн позицисене атакăланă. Кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн гитлеровецсене каялла хăвалаça янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 60 виллине вырта юлнă, гитлеровецсем хĕçпăшал нумай пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксен ушкăнĕ засада тунă та противникăн 14 салтакĕпе пĕр офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре артиллеристсем миномётсенчен пĕрре пĕрин çине сайра хутра персе тăнă. Пĕр чăсри миномётчиксем тăшманăн 3 орудине пĕтерсе тăкнă, нимĕç пехотин колоннине сапаласа янă. Лейтенант Абрыкин юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири снайперсем 5 кун хушшинче 47 нимĕçе вĕлернĕ. Тепĕр подразделенири снайперсем темиçе кун хушшинче 14 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Севск районĕнче пĕр чăсăн артиллеристчĕсем тăшманăн орудине, ултă кĕпçеллĕ 3 миномётне, 7 пулеметне тата тĕрлĕ пурлăх тиенĕ 18 лавне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противникăн контратакине сирсе янă, гитлеровецсене пĕр ротăна çити вĕлернĕ.

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чăсри разведчиксен ушкăнĕ противник вырнаçса тăракан вырăна сасартăк кĕрсе кайнă та нимĕçсен темиçе çĕр пӳртне гранатăсем ывăтма тытăннă, çавăн чухне гитлеровецсене 40 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем хăйсен чăсĕсене чиперех таврăннă.

* * *

Щорс ячĕпе тăракан партизансен отрячĕ, Чернигов облаçĕнчи пĕр районра кĕрешекенскер, халăх пурăнакан пысăк пунктра çĕрле гестапо отделенине тапăннă. Партизансем гестапо отделенине аркатса тăкнă та кирлĕ документсем тытса илнĕ. «Спартак» ятлă отрядра партизансем нимĕçсен бронемашинăсем турттарса пыракан çар эшелонне минăсем хурса сирпĕнтерсе янă. Паровозпа 9 платформăна пĕтерсе тăкнă. Ворошилов юлташ ячĕпе тăракан отрядри партизансен ушкăнĕ пĕр автомашинăна тата унта пулнă 8 нимĕç салтакне пĕтернĕ.

* * *

Греци патриочĕсем Италипе Германи оккупанчĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕве ытларах та ытларах вăйлатаççĕ. Фессалире партизансем итальянецсен 4 гарнизонне ăнăçлăн тапăннă. Çапăçусем вăхăтĕнче тăшманăн 200 салтакне ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Итальянецсен пĕр ушкăнне тыткăна илнĕ. Тепĕр районра партизансен отрячĕ тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерьне систермесĕр кĕрсе кайнă та нимĕç хуралне пĕтерсе тăкнă. Тыткăна лекнĕ çар çыннисене пурне те ирĕке кăларнă. Юлашки кунсенче Афинăра тата Патрасра патриотсем оккупантсене сутăннă 9 сутăнчăка вĕлернĕ.

Гектартан 18-шар центнер тырă илетпĕрех

«Янмурзино» колхозри ĕçсыннисем аслă полководец Сталин юлташăн каçнин çăмахне чĕрене хунă. Кашни колхозник фронт ыйтăвĕсене колхозра пархатарлăн ĕçленипе тивĕçтерес кăмăлпа пурăнать.

Пирĕн колхозниксен шухăш-кăмăлĕсем питех те тĕрĕс. Вĕсем çуракинче тĕрĕ-пĕрине ăмăртса ĕçлерĕç. Кашнийех хăйĕн пултарулăхне уйхирте ырмиканми ĕçленипе кăтартма тăрăшать. Аксиния Иванова колхозница çуракинче сухаçă пулса ĕçлерĕ, кулленхи нормăна 150—160 процент тултарса пычĕ. ĕçе пысăк пахалăхпа турĕ.

Шăтса тухнă калчасем савăнтараççĕ. Уйхирте кăçал пуян тыррпул ÿсет. Мария Константинова, сеялкăпа куллен 7—8 гектар тырă акнăскер, халĕ хăйĕн ĕçĕн результачĕсене курса савăнать. Вăл ĕçлекен бригада тырăсене кăçал йăлтах машинăпа акрĕ.

Кăçал план тăрăх пĕтĕмпе 235,5 гектар акса хăвармаллаччĕ. Эпир 245,5 гектар акрăмăр. Вăл шутран 198 гектар машинăпа акнă. Тырра сеялкăсемпе акакансем Л. Петров, Е. Сергеев юлташсем куллен нормăна 110—120 процент тултарса пычĕç.

Суракинче ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пыма звенопа ĕçлени пулăшрĕ. Р. Коннова, Ф. Белова, 53 çулхи сухаçă А. Чистов куллен 1,50-шар гектар сухалама тултарчĕç. Плугсем те, сеялкăсем те ĕçре çирĕп пулчĕç. Гордеев тимĕрçĕн ĕçĕ паха пулчĕ. Çуракин вăхăтĕнче те вăл хăй юсанă плугсем мĕнле ĕçленине сăнасах тăчĕ.

Çуракине хăвăрт туса иртгерме колхозра общество столовăй пуфри тата ирхи-кăнтăрлахи апатсене уйрах ситерни пулăшрĕ. Кунсăр пуçне каçну вăхăчĕсене кĕске тунă. Пĕр вăхăт хушши тимлĕн ĕçленĕ хыççăн 10 минутăлăх канну тунă вăхăтра лашасене утă ситернĕ. Çапла вара акара пĕр лаша та ывăнмарĕ.

Эпир СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси синчен йышăннă постановленийе тĕплĕн пурнăçласа тыратпăр. Çуракинче лайăх ĕçленĕ тата нормăсене тултарса пынă колхозниксене 6 çынна ĕçшĕн хушса тÿленĕ. Çакă вăл колхозниксен ĕçлес кăмăлне татах та ытларах ÿстерчĕ. Кашни бригадăрах кун сиктерсе боевой листоксем тухса тăнă. Колхозра «Большевик» стена хаçат 6 номер тухнă. Унта стахановецсен паха ĕçне кăтартса пынă, каххалсемпе ĕçе пăсма пăхакансене хытăн питленĕ.

Халĕ колхоз çĕрулмисемпе пахча-çимĕçсене те пĕтĕмпех лартса пĕтерчĕ. Анчах та вăйсă тырпулĕн кĕрешес ĕç пуçланчĕ кăна-ха. Кĕрхи калчасем çинче çумкурăксем çук пулсан та, çурхи тырăсене çумкурăксенчен тасатма халех тытăнатпăр. Сум çумлама 16 звено тунă. Çурхи калчасене мулчирование тăватпăр тата тислĕк пывĕпе, минераллă удобренисемпе апат паратпăр.

Тырăсем хăвăрт çитĕнеççĕ. Нумаях тăмаспăр, кĕçех утă çулма пуçлатпăр. Çавăнпа та тыррпулсене уйхиртен пуçтарса кĕртме хатĕрленес ĕç питĕ пысăк задача пулса тăрать. Халĕ эпир виçĕ жнейка юсаса хатĕрленĕ. Кĕреплеллĕ çавасем 32 пур, 322 çурла пăлласа хунă.

Транспорт инвентарĕ çителĕклĕ. Лашасене колхозниксем йĕркеллĕ тытма вĕренсе çитрĕç. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ лашасем ĕрчетесси çинчен йышăннă питĕ кирлĕ постановленийе колхозниксем хушшинче сÿтсе-явса, тивĕçлĕ мерăсем йышăнтăмăр. Кăçалхи çамрăк тихасене пурне те тĕрĕс пăхса çитĕнтеретпĕр, лаши кĕсреме вăхăтра чуптарса хăваратпăр.

Пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, ялхуçалăх çулне кăçал ăнăçлăн вĕçлеме шанатпăр. Кашни колхозникĕн ĕмĕтне — гектартан 18 центнер тĕштырă илессине пурнăçлатпăрах.

П. ЕФРЕМОВ,
ЧАССР Верховный Совет депутачĕ, Красноармейски районри «Янмурзино» колхоз председателĕ.

Чăх-чĕп фермин че

Матвей Самарин иккĕмĕш çул ĕнтĕ Тăвай районĕнчи «Хурçă» колхозра чăх-чĕп фермин заведующийĕ пулса ĕçлет. Хăйĕн ĕçне вăл питех те юратса тăвать. Хăех заведующи, хăех чăх-чĕпсене пăхаканĕ, хăех хуралçă та пулса тăрать. Пĕр сын—виçĕ сынпăн! Çавăн пек хастарлă вăл ватă мучи. Ĕçре вăл кирек хăçан та лайăх пример кăтартать. Акă вăл 1942 çулта 200 чăхран 15 пин çăмарта илнĕ. Кашни чăх вăтамран 75 çăмарта тунă. Государствăна çăмарта памалли плана колхоз чи малтан тултарнă.

Хальхи вăхăтра Матви мучин фермине 169 чăх. Вĕсем 5 уйăх хушшинче 6.800 çăмарта тунă. Самарин юлташ пăхакан чăхсем хĕлĕн-çăвĕн çăмарта тăваççĕ. Мĕншĕн тесен, чăхсене вăл вăхăтра тата кирлĕ пек апатлантарать. Кирлĕ пулсан кĕленче, чул, шăмă ватса парать, курăк татса пăтратни туса çитерет. Çавăнпа унăн чăххисем чирлемеççĕ, куллен çăмарта тăваççĕ.

«Хурçă» колхоз 1943 çулшăн государствăна çăмарта парса татрĕ. Чăх-чĕпрен колхоз пысăк усă илет. Çавăнпа та чăхсен йышне кăçал татах 450 пуса çити ÿстерме палăртнă. Самарин юлташ çак наряда пурнăçлас тĕлĕшпе 30 чăхха пусма лартнă. Чăсах фермăра сĕнĕ йăх хушăнать. Çапла ĕçлет Матвей Самарин, фронта ĕçпе пулăшать.

В. ЧЕРНОВ.

Государствăна килес çулшăн та аш-какай парĕç

ЭЛЕК. Пиçенерти «ВЛКСМ-ăн 9-мĕш съезчĕ» колхоз хăйĕн фермисене выльăхсемпе комплектласа ситерчĕ. Колхозниксем кăçал та колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕхе планпа пăхнинчен ытларах усрасшăн тăрăшаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли апат-çимĕç хатĕрлес ĕç пуçланчĕ. Силос хывмалли шăтăксене юсаса тÿрлетеççĕ, çĕнĕрен чаваççĕ, утă çулма тухма хатĕрленеççĕ.

Колхоз государствăна 1943 çулта аш-какай памалли обязательствăна тултарчĕ, 1944 çулшăн та 55 процент чухлĕ парчĕ. Çавăн пекех колхозниксем те хăйсен хуçалăхĕнчен памалли обязательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç.

А. НИКОЛАЕВА.

Вăтакас Татмăш колхозникĕсем хăйсен землякне — гвардеец Захарова ответлеççĕ

Канаш районĕнчи Вăтакас Татмăшри Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем патне нимĕç захватчикĕсене хирĕç фронтра çапăçакан гвардеец Николай Иванович Захаров çыру ячĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ăна хăйсен аслă пухăвĕнче сÿтсе-яврĕç.

«Сывă-и, хаклă тăванăмсем, колхозниксемпе колхозницăсем! — тесе çырать Захаров юлташ.—Сире пурне те Çурçĕртен хĕрÿллĕ салам яратăп.

Хăвăрах пĕлетĕр, ирсĕр тăшманпа эпĕ икĕ çулталăка яхăн çапăçатăп ĕнтĕ. Çапăçасси çăмăл мар. Вăрçă ук тăкмасăр пулмасть. Эпир ирсĕр нимĕçе пĕтерессишĕн хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр пĕтĕм вăйпа çапăçатпăр. Тăшман пирĕн ĕмĕр тăнмасан тинĕсе хăй алли тытса илесшĕн темиçе хутчен те тапăçланса пăхрĕ. Совет воинĕсем вĕсене вăйлăн пырса çапрĕç. Эпир Советсен ĕмĕр тăнман портне ирсĕр тăшмана нихăçан та парас çук.

Эпир кĕçех тăшмана хамăрăн çĕр çинчен хуса кăларăпăр. Анчах çак ĕçре, пĕтĕм совет ĕçсыннийĕсем фронта вăйлăн пулăшса тăни кирлĕ. Эпир кунта орденлă Чăваш республикине Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата тикĕмĕш посмин пани синчен пĕлтĕмĕр. Тăван республика çакăн пек тивĕçлĕхе илнĕшĕн савăнатпăр. Орденлă республика çинче вĕлкĕшсе тăракан Хĕрлĕ Ялавшăн нимĕçсене вакласа пăр. Тăшманăн пĕтес кунçулĕ инçе юлмарĕ. Эсир, манăн хаклă тăванăмсем, фронта пулăшассине ытларах та ытларах вăйлатса пырăр. Совет Союзĕн Маршалĕ аслă Сталин ертсе пынипе çĕнтерÿ пирĕн алăра пулать!»

Çырăва сÿтсе-явнă хыççăн колхозниксем пурте пĕр кăмăлпа паттăр земляк патне çыру яма йышăнчĕç.

«Кăçал пирĕн колхоз çуракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕ, ăна кĕске срокра вĕçлерĕ, — тесе çыраççĕ колхозниксем. — Акмалли çĕрĕн пĕтĕм лаптăкне — 230 гектар çĕре агротехника правилисене пурнăçласа акрăмăр. Кунсăр пуçне 2 гектар оборона фончĕ валли акса хăвартăмăр.

Акнă тырпула пухса кĕме пирĕн ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Фронта кайнă çынсен вырăнĕсене хĕрарăмсем тăчĕç.

Çуракинче 3-мĕшпе 4-мĕш бригадăсем мала тухрĕç. 3-мĕш бригадăра ВКП(б) членĕн кандидачĕ, вăлах ВЛКСМ пуçламĕш организацин секретарĕ К. Седова юлташ колхозниксене Верховный Главнокомандующий Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне тĕплĕн ăнлантарса пачĕ. Ун хыççăн колхозниксем ĕç нормине 150—160 процент тултарса ĕçлерĕç. М. Васильева, Р. Хрисанова колхозницăсем куллен 2,25-шер ĕçкунĕ турĕç. 4-мĕш бригадăра партин членĕ П. Михайлов, хăйĕн сывлăхĕ начаррине пăхмасăрах, акас ĕçĕн нормине 120—130 процент тултарса пычĕ.

Кăçал та вăйлă тырпул туса илессине шанса тăраççĕ, калчасем аван. Калчасене эпир тĕрлĕ удобренисемпе апат паратпăр.

Тăван çĕршывăн оборона фондне эпир 33 центнер тырă, 9 центнер какай патăмăр, самолетсемпе танксем тума 60.000 тенкĕ пухрăмăр. Хĕрлĕ Çар боецĕсен çемьисене пулăшас ĕç валли 55 центнер тырă уйăрса хутăмăр.

Пирĕн умра уйри тырпула кĕске срокра, пысăк пахалăхпа пухса кĕрес задача тăрать. Ку ĕçе эпир пысăк пахалăхпа туса ирттерессишĕн, Янкăтчăри Каганович ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлетпĕр. Колхозра бригадăпа бригада ăмăртать. Ватă тимĕрçĕ Николай Данилов уборка валли урапасем юсать, жнейкăсемпе косилкăсене те юсама тытăнчĕ.

Шансах тăр Николай Захарович: санăн пирĕншĕн тăванла халăхсен ывăлĕсем умĕнче хĕрелме лекмĕ. Эпир государство умĕнчи хамăрăн обязательствăсене вăхăтра пурнăçласа пырăпăр. Тылпа фронт хушшинчи çыхăну татах çирĕпленĕ. Пер, çап, вĕлер нимĕçе!

Колхозниксем хушшипе:

Колхоз председателĕ **К. ЯРАНСКОВ,**
Агитколлективĕн руководителĕ **Т. ТУРХАН.»**

ШКУЛСЕНЧИ ПĔЛӲ ТĔРĔСЛЕВĔСЕМ

ИШЛЕ. Районри шкулсенче пĕлÿ тĕрĕслевĕсем иртнĕ çулхинчен лайăхрах пулса иртеççĕ. Ишлери вăтам шкулта вĕренекенсен 98,6 проценчĕ вĕренÿре пур предметсемпе те ĕлкĕрсе пынă пулни курăнчĕ. Çавăн пекех Хирпоссинчи, Çĕньял-Покровскинчи тулликсăр вăтам шкулсем те вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш вĕренÿ çулĕнче ачасене лайăх вĕрентнĕ.

Районра 22 пуçламăш шкул. Вĕсенче вĕренекенсен 97 проценчĕ тĕрĕслÿре лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. 8 пуçламăш шкулта вĕренекенсем тĕрĕслÿсенче пĕр начар паллă та илмерĕç. Уйрăмах Мăн Катрасри (заведующийĕ Егоров юлташ), Хăчăкри (заведующийĕ Львов юлташ), Хурасьırмари (заведующийĕ Карецкая юлташ) шкулсем ачасене çирĕп пĕлÿ панă.

Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче районри шкулсенче вырăс чĕлхипе математикăна çителĕксĕр вĕрентни палăрчĕ. Ишлери вăтам шкулта, Кăшавăш шкулĕн 7-мĕш класĕнче тата Чантăрти пуçламăш шкулта вĕренекенсем вырăс чĕлхине начар пĕлни курăнчĕ.

Вăрăм Ту шкулĕнче арифметикăна çителĕксĕр вĕрентнĕ.

КУКЕÇ. Платкари пуçламăш шкулта пĕлÿ тĕрĕслевĕсене малтанах тĕплĕн хатĕрленнĕ. Вĕренÿ материалне тимлĕн тĕрĕслесе тухнă, билетсене тата расписание тĕплĕн шутласа хатĕрленĕ. 4-мĕш класра вĕренекенсем тăван чĕлхепе диктанта лайăх çырнă. Тĕрĕслÿре пулнă вĕренекенсенчен диктанта 11-шĕ «отлично», пĕр ача — «хорошо», 6 ача — «посредственно» çырнă. Ытти предметсемпе те вĕренекенсем çирĕп пĕлÿ илнĕ. Çапла вара класри 18 вĕренекенрен пурте 5-мĕш класа куçрĕç. Класри чи лайăх вĕренекенсем — Ю. Лазарева тата В. Васильев мухтав грамоти илчĕç.

Платка шкулĕнче çав класах тĕпĕп çула хăварнă пĕр ача та çук. Шкулĕпе 13 отличник, 20 ударник.

Шкул халĕ кĕрсех çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленет. Вĕренекенсем кăçал шкул участокĕнче пĕр гектар çине çимĕçсем лартса хăварчĕç. Çакă вăл çитес вĕренÿ çулĕнче вĕрн апат çитерес ĕçе лайăх организацилеме май парать.

Н. МЫШКИН.

КРОСА ЛАЙĂХ ХАТĔРЛЕННĔ

Канашри педучилищĕри вĕренекенсем кроса майăн 24-мĕшĕнче хутшăнчĕç. Кросс участникĕсем кросс пуçланиччен военрук В. Грабко ертсе пынипе тренировкăллă занятисем туса ирттерчĕç. Унта пластунла шума, граната ывăтма, чупма хатĕрленчĕç. Кроса хутшăннисене пурне те медицина енчен пăхса тухрĕç.

Кроса кунта 110 çын хутшăнчĕ. Кроса хутшăннисем пурте чупса, граната ывăтса, пластунла шуса, ГТО, БГТО нормисене пачĕç. Хĕрачасем те кроса паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Акă III-мĕш «Д» класра вĕренекен Мария Лаврова граната ывăтассипе те (30 метр), пластунла шăвассипе те, чупассипе те лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Арçынсенчен уйрăмах Миронов, Игнатьев, Авакумов, Разумов, Григорьев, Егоров т. ыт. те паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем 30 метрлă хушша пластунла шуса, кăтартнă вăхăтран малтан тухрĕç.

Кросс çавăн пекех Сиккассинчи вăтам шкулта та аван иртрĕ. Кроса хутшăннă 200 вĕренекентен 177-шĕ БГТО, ГТО нормисене панă.

И. МАКСИМОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Колхозри мĕнпур ĕçсен организаторĕ

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Ямашкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци пысăк мар. Унта парти членĕсем 4, кандидатсем 2. Парторганизаци кăçал кандидата 5 çынна илнĕ, вĕсенчен 4-шĕ урăх çĕре куçса кайнă. Çак пысăк мар организацири коммунистсем, хальхи обстановкăн условийĕсене тĕрĕс ăнланса илсе, пĕтĕм ĕçе вăрçă интересĕсемшĕн туса пыма тăрăшаççĕ.

Парторганизаци, çавăн пекех унăн секретарĕ Зайцева юлташ колхозниксем хушшинче пысăк авторитетпа усă кураççĕ. Колхозниксене политикăллă воспитани парас енĕпе парторганизаци пысăк ĕçсем туса пырать. Партипе правительство йышăннă постановленисене колхозниксем патне вăхăтра çитерет.

Парти организацийĕ хăй тавра партире тăман актива пĕтĕçтерсе тăрать. Активистсем колхозниксене куллене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, каласусем ирттереççĕ, агитаторсем пулса ĕçлеççĕ.

Партире тăман актива парторганизаци час-часах хăйĕн уçă пухăвĕсене чĕнет, ăна кулленхи ĕçре вĕрентсе, пулăшса пырать. Массăпа таччăн çыхăнса ĕçлени парторганизацине ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра палăртса тата вĕсене çийĕнчех пĕтерме пулăшать.

Кунта парти членĕсен пухăвĕсене тăтăшах туса ирттереççĕ, вĕсенче колхоз производствин ĕçĕсем çинчен сÿтсе-яваççĕ. Пухусем йĕркеллĕ пулса иртеççĕ, конкретнăй решенисем йышăнаççĕ.

Коммунистсем колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Кашни коммунист — агитаторĕ.

Коммунистсем ĕçре хăйсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ, пурте ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ, И. Кузьмин—колхоз председателĕ, С. Филиппов—хурт-хăмăр утарĕн заведующийĕ тата колхоз председателĕн заместителĕ, Р. Петров—ялсовет исполкомĕн председателĕ А. Игнатьева—налог агенчĕ, С. Кузьмин—пушар дружинин начальникĕ. Вĕсем пурте хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пыраççĕ, колхозниксене те çавăн пек ĕçлеме мобилизацилеççĕ.

Коммунистсем çураки вăхăтĕнче кăна 18 хутчен калçусем тата докладсем ирттернĕ. 120 хутчен хаçат вуласа панă.

Колхоз халĕ тырпулсене пухса кĕме тимлĕн хатĕрленме тытăнчĕ. Паянхи кун тĕлне жнейкăсемпе молотилкăсене юсаса пĕтернĕ, урапасене, михĕсене тата ытти хатĕрсене те çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ.

Колхоз государствăна аш-какай, сĕтçу парса татрĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те государство планне тултарнă.

Парторганизаци тăван Хĕрлĕ Çара, фронта пулăшас тĕлĕшпе ырă ĕçсем туса ирттерет. Фронта пулăшас ĕçре коммунистсем хăйсем пример кăтартаççĕ, колхозниксене çав ĕçе мобилизацилеççĕ. Кăçал Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 65 тир, 23 килограмм çăм, 2 мăшăр çăматă, 1 фуфайка, 53 çĕлĕк, 16 мăшăр алшăш пухнă. Оборона фондне 80 пин тенкĕ укса, 120 пăт тырă хывнă. Çуракинче оборона фончĕ валли 2 гектар тулă, 2 гектар пăрçа 6 гектар сĕлĕ акса хăварнă.

Ку парторганизацирен районри ытти организацисем чылай вĕренме пултараççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Пирĕн авиаци Орел чугунçул узелне вăйлăн пырса тапăнни

Июнĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Орел чугунçул узелне тата унăн тавралăхĕнчи районсене массăллăн вĕçсе пырса тапăннă. Çав тапăнăва пирĕн 520 самолет хутшăннă.

Чугунçул узелĕ çине аркатса тăкмалăх бомбăсем пăрахнипе пула çав тери нумай çĕрте пушарсем тухнă — чугунçул эшелонĕсем, боеприпассемпе горючи складĕсем çуннă. Пушарпа пĕрле вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн самолетсем, пĕр самолетсăр пуçне, пурте хăйсен базисене таврăннă.

ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂНХИ АПАТ-ÇИМĔÇ ЫЙТĂВĔСЕМ ТĂРĂХ ПУХĂННА ПĔРЛЕШУЛЛĔ НАЦИСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔН ЮЛАШКИ ПЛЕНАРНĂЙ ЛАРĂВĔ

ХОТ СПРИНГС (Виргини штачĕ) июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян вăрçă хыççăнхи апат-çимĕç ыйтăвĕсем тăрăх пухăннă пĕрлешÿллĕ нацисен конференцийĕ хупăннă. Юлашки пленарнăй ларура конференци председателĕ Джонс Англи делегацийĕн председательне Лоуна юлашки резолюцие сасăлама лартма хушнă. Вăл резолюцие принципсен декларацийĕ, вăхăтлăх комисси тата яланлăх организаци тума палăртнă резолюци тата конференцин тăватă секцийĕсем сĕннĕ резолюцисем кĕреççĕ. Конференци çав резолюцие пĕр сасăпа ырланă. Çакăн хыççăн Джонс совет делегаци председательне А. Д. Крутикова сăмах панă. Конференци делегачĕсем ăна ăшă кăмăлпа йышăннă. Конференци Крутиков сĕннĕ резолюцие йышăннă, вăл резолюципе конференци ĕçĕсене пулăшса тăнăшăн Рузвельта тав тунă.

США ва СУТУ-ИЛУ КАРАПĔСЕМ ТУНИ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Виккери адмирал пичет представителĕсене çапла каланă: май уйăхĕнче Америка верфĕсенче 175 суту-илÿ судни туса кăларнă, вĕсен пĕтĕмĕшле водоизмещенийĕ 1 миллион та 782 пин тонна. Иртнĕ 5 уйăх хушшинче Пĕрлешÿллĕ Штатсем 711 суднă туса кăларнă, вĕсен пĕтĕмĕшле водоизмещенийĕ 7 миллион та 142 пин тонна. Унччченхи вăхăта илсен, пĕлтĕр пĕтĕм çулталăкĕпе те 8 миллион тонна водоизмещенирен кăшт кăна ытларах туса кăларнă. Хальхи вăхăтра верфьсем хăйсем мĕн чухлĕ туса кăларма пултарнă чикке çитнĕпе пĕрех ĕнтĕ.

Пĕлтĕрхи август уйăхĕнчен пуçласа строя кĕнĕ суднăсен хисепĕ союзниксен тинĕсре пĕтнĕ суднисен хисепĕнчен нумай пысăкрах.

Çитес çулта США „Победа" йышши 400—500 судно туса кăларма шутлать. Ку суднăсемпе вара вăрçă хыççăнхи суту-илÿре те усă курма май пулать.

КĔСКЕН

▲ Америка учрежденийĕсен официальнăй материалĕсем тăрăх, Тунисра тытса илнĕ çар хатĕрĕпе 7 дивизие пĕтĕмĕшпех хĕçпăшаллантарса çитерме пулать. Çав трофейăсем Америка хĕçпăшалĕпе пĕрле французсен çарне хĕçпăшаллантарма та каяççĕ. Англире халĕ Тунисра тытса илнĕ нимĕç орудийĕсем валли боеприпассем туса кăларма тытăннă та ĕнтĕ.

▲ Америкăн Лăпкă океанра çÿрекен подводнăй лодкисем вăрçă пуçланнăранпа Японин 169 суднине шыва путарнă. Унсăр пуçне тата 27 карапа путарнă пулмалла, 44 суднăна сиенленĕ пулмалла, тесе шутлаççĕ.

АРГЕНТИНĂРА КАСТИЛЬО ПРЕЗИДЕНТА ХИРĔÇ ВОССТАНИ ПУÇЛАННĂ

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Монтевидеоран çапла пĕлтерет: ăнлĕ хыпарсем тăрăх, Аргентина çарĕнче Кастильо президента хирĕç восстани пуçланнă. Восстани Кастильо президента ирĕклĕ суйлавсем туса ирттерме кирли çинчен, правительствăн тулашри политикине улăштарма кирли çинчен ультиматум тăратнă хыççăн пуçланнă. Малтанхи пĕлтерÿсем тăрăх восстани ăнăçлă пырать.

ПОЛЯКСЕН АНГЛИРИ ПИЧЕЧĔН ĔÇĔСЕМ ÇИНЧЕН АНГЛИН ИНФОРМАЦИ МИНИСТРНЕ ПАНĂ ЫЙТУСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Паян общинăсен палатинче Мандер либерал ыйту панă: Совет правительстви пирки тăшманла позици тытакан ютçĕрпыв хаçачĕсен, Англире тухса тăракансен, ĕçĕсене тĕрĕслес ĕç вĕçленсе пырать-и, тенĕ. Лесли лейборист информаци министрĕнчен: поляксен Англири хăшпĕр хаçачĕсем «Смоленск патĕнче массăллăн вĕлернисем çинчен» халĕ те нимĕçсем хыççăн кайса сÿпĕлтетни çинчен пĕлетĕр-ши эсир тата вăрçăра пĕрлĕх тытас интерессемшĕн çав хаçатсене хупас ыйтăва сÿтсе-явма шутламастăр-ши? — тесе ыйтнă.

Çак ыйтусем çине ответлесе, информаци министрĕ Бракен тĕпчесе пĕлес ĕç вĕçнелле пырать, тенĕ. Çакăнпа пĕрлех, тенĕ Бракен, иртнĕ эрнере асăрхаттарни çав хаçат редакторĕсене вĕсем çинчи ответлăх çинчен çĕнĕрен туйтарса илессине шанма пулать. «Апла пулмасть пулсан,—тенĕ Бракен,— Англире хăналаннипе усă курса, пĕрлешÿллĕ нацисем хушшинче хирĕçÿсем пуçарас шутпа усал ĕçсем тăвакансене хирĕç информаци министерстви çирĕп мерăсем йышăннине палата кăмăл тăвĕ, тесе шутлатăп».

Лесли тепĕр ыйту панă: «Геббельсăн суялăх фабрики çавăн пек суя хыпарсем сарни союзниксем хушшинче хирĕçÿ кăларас шутпа тунă ĕç пулать тенипе министр килĕшмест-и? тенĕ. Кун çине Бракен çапла ответ панă: «Çав •сăлтава пула хаçатсене эпир асăрхаттартăмăр та ĕнтĕ, эпĕ татах калатăп: асăннă хаçатсем çавăн пек кампанисене туса ирттерни Англи хăналанипе усă курса усал тума хăтланни пулать»

Дагдейл лейборист: «Англире хальхи вăхăтра нумай мар йышлă пурăнакан поляксен 31 хаçат тухни ытла нумай мар-ши?» тесе ыйтни çине ответлесе, Бракен çапла каланă: «пĕр поляк çынни те пулин пур çĕрте яланах поляк хаçачĕ тухма пуçлать, тесе эпĕ тахçанах каланăччĕ» тенĕ. (Куллаççĕ).

СУД

Варасене тивĕçлипе айаплана

Шупашкарти пир-авăр фабрикинче мастер помощникĕсем пулса ĕçленĕ Опарина, Никитина тата Хлебникова, Виноградова, Кожатова ткачихăсем фабрикăран темиçе уйăх хушши 10—15-шер метр пир иле-иле тухса пасарта пысăк хакпа сутнă. Каярахпа хурал тимсĕр пулнă пирки 80-шар метрлă тĕркесене Войнова хушаматлă çынна хÿме урлă тытгарса ăсатнă. Войнова вĕсене сутма пулăшнă.

Шупашкарти 4-мĕш участокри халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухса, варăсене тивĕçлипе ответ тыттарчĕ. Опаринăпа Никитинăна виçшер çул, Хлебниковăпа Виноградовăна 5-шер çул, Кожатовăна 2 çул, вăрланă япалана сутма пулăшнă Войновăна 5 çул хушши тĕрмере хупса усрамалла, фабрикăна 10.000 тенкĕ укса тÿлеттермелле туса приговор йышăнчĕ. Çавăн пекех хурал начальникне те ответ тыттарнă. 4-мĕш участокри халăх сучĕ йышăннă приговора фабрикăри рабочисем кăмăлласа йышăнчĕç.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чебторга культтоварсем (ача-пăча теттисем, домино, пеналсем, линейкăсем, ручкăсем т. ыт. те) тума пĕлекен специалистсем, мастерскойра е килте çĕлекен çĕвĕçсем, атă-пушмак юсама пултаракан специалистсем, галошсем саплакан специалистсем, гуталин, чернил т. ыт. те хатĕрлекен специалистсем, çавăн пекех тата çамрăк ученниксем (арçын ачасем те, хĕрачасем те) кирлĕ.

Апат-çимĕç тĕлĕшпе тата ытти условисем çинчен те çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Ленин урамĕ, 11, Чебторг, Кадрсен отделĕ.

3—2.

Шупашкарти торгплодоовощ межрайконтори вĕлтрен çулçисене, кăмпа, ут, серте тата пултăран пухма пуçларĕ. Вĕсене пухса Торгплодоовощ заготпункчĕсене илсе пымалла: Шупашкар хули, Кировски поселок, Гражданская урам, 2. Сосновка ялĕнче тата Сĕнтĕрвăрри хулинче те илеççĕ.

Пирĕн земляксем

ЗАСАДĂРА

Кăçалхи март уйăхĕнче фронтри пĕр участокра тухса тăракан «Красноармейский удар» хаçат боецсене кĕскен çапла пĕлтернĕ:

«Çак кунсенче старши лейтенант К. М. Кольцов ертсе пыракан пирĕн разведчиксен группи гитлеровецсене хирĕç çĕрлехи засадăна тухнă. Засадăна пырса лекнĕ фашистсене пирĕн разведчиксем çил-тăвăллăн вут тăкнипе кĕтсе илнĕ. Кĕске вăхăта пынă тытăçура пирĕн разведчиксем 22 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Çак операцинче: сержант Евтухов, пулеметчик Рубан, минометчик Елтеев тата Яковлев, Сергеев, Петряков, Ведякин, Лукьянчиков разведчиксем уйрăмах хăйсен паттăрлăхне кăтартнă».

Хаçат çапла çеç пĕлтернĕ пулин те, ку хыпар фронтри красноармеецсем хушшинче хăвăрт сарăлнă, старши лейтенант Кольцов ертсе пыракан разведчиксен пултаруллă та паттăр ĕçĕсем çинчен ырă ят сарăлнă.

Старши лейтенант Константин Михайлович Кольцов—пирĕн земляк. Вăл Шăхасан районĕнчи Анат Сурăм ялĕнче çуралса ÿснĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланичченех «Çамрăк большевик» хаçат редакцинче ĕçленĕ.

Мирлĕ вăхăтра Кĕстÿк Кольцов сăвăсем те нумай çырнă. Ун чухне Кольцова пире сарлака диапазонлă поэт пулма шантарчĕ. Вăл пĕтĕмĕшпех хамăрăн юратнă Тăван çĕршыв пурнăçĕпе пурăнатчĕ.

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче гитлерла вăрă-хурахсем пирĕн çĕр çине ултавлăн тапăнса кĕчĕç, тăшман урăм-сурăм вут кăларчĕ, вутлă çумăр тăкма пуçларĕ. Анчах пирĕн аслă халăх пĕртте хăрамарĕ, тăшмана хирĕç пĕр çын пек харăс çĕкленсе тухрĕ. Отечественнăй вăрçă пуçлансан Кĕстÿк Кольцов Хĕрлĕ Çар ретне тăчĕ.

Халĕ Кольцов фронтра. Вăл халь çĕр çинчи чи ирсĕр çĕленсене — Германи фашисчĕсене вакласа турать.

Кольцов юлташ темиçе хутчен хаяр çапăçусенче пулнă, вăл кашнинчех çĕнтернĕ. Кунта эпир «Красноармейский удар» хаçатра асăннă ĕçе сеç тĕплĕнрех çырса кăтартăпăр.

II

Командовани приказне илнĕ хыççăн вĕсем кас пулсанах засадăна тухса кайрĕç. Пĕр вăрман хĕрне çитсе лайăх пытанса выртрĕç. Тÿпере çăлтăрсем йăлкăшаççĕ. Сивĕ. Анчах красноармеецсем уншăн хăрамаççĕ, вĕсем лайăх тумланнă. Кунтан та ытларах, вĕсен чĕрисем тăшмана сĕнтерес хастарлăхпа çунса тăраççĕ.

Сĕр касиччинех тăшмансем курăнмарĕç. Тул сутăлчĕ. Акă, сасартăк Кольцов патне сылтăм флангра выртакан сержант Евтухов тăшман разведчикĕсен пысăк ушкăнне асăрхани çинчен хыпар çитерчĕ. Старши лейтенант Кольцов хăйĕн разведчикĕсене тăшмана хастарлăн кĕтсе илме приказ пачĕ.

Нимĕнле хăрушлăха та асăрхамасăр, фашистсем пĕтĕм кÿленипе утса килеççĕ. Вĕсем пирĕн разведчиксем пытанса выртнă вырăнах çывхарса çитрĕç.

Талккăшпех юрпа хупланнă çĕр чĕтреме пуçларĕ, пирĕн разведчиксем фашистсем çине вут-хĕм тăкма пуçларĕç. Пулеметчик Рубан тăшмансене çавапа çулса тăракан пек йăвантарать.

— Перĕр! — команда пачĕ Кольцов.

Тăшмансем выртрĕç, пирĕн разведчиксем хирĕç çапăçма пуçларĕç. Çак вăхăтра старши лейтенант Кольцов хăрушă картина асăрхарĕ: тăшман разведчикĕсем хыççăн вĕсем калама çук йышлă разервĕсем килеççĕ. Пирĕн сахал йышлă разведчиксем умне çав тери пысăк хăрушлăх сиксе тухрĕ. Анчах, çапăçусенче шиксĕ Кольцов хăрамарĕ. Вăл телефон патне чупса пычĕ те, хамăрăн тылра тăракан артиллеристсене тăшмансен резервĕсем килекен районa персе тăма хушрĕ. Тепĕр пилĕк минутăранах тăшман разведчикĕсемпе резервĕсем хушшинчи çула пирĕн артиллери вут-çулăм хыптарчĕ. Ăна кура пирĕн разведчиксем пушшех те çĕкленсе кайрĕç, тăшмансене хирĕç тата хытăрах çапăçма пуçларĕç.

Тăшмансем вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Вĕсем пирĕн разведчиксем çине гранатăсем ывăтма пуçларĕç. Вĕсен виçĕ гранати пирĕн пулеметчик Рубан патĕнчех çурăлчĕç. Пулемет сасартăках ĕçлеме чарăнчĕ. Старши лейтенант Кольцов ун патне питĕ хăвăрттăн шуса пычĕ. Рубан юр çинче выртать, унăн питĕ чĕп-чĕр юн. Кольцов пулеметран тăшмансем çине пĕр ăстрăм тăхлан çумăр çутарчĕ. Унтан вара Рубан сурăмне çыхса ячĕ.

— Командир юлташ... Эп хамах! — терĕ Рубан Кольцова. Ун хыççăн вăл каллех пулеметран пеме пуçларĕ.

Тепĕр виçĕ минута иртсен Кольцов ура çине çĕкленчĕ.

— Вĕлерер нимĕçе, туссем! — тесе кăшкăрчĕ те, тăшмансем çинелле ыткăнчĕ. Ун хыççăн старши сержант Прокофьев, Лукьянчиков, Ведякин, Дорогин, Турков, Петряков, Поликашин тата ыттисем те çĕкленсе тăшмана хирĕç тухрĕç, штык вĕççĕн çапăçма пуçларĕç.

Фашистсем хушшинче паника пуçланчĕ, вĕсем тарма пикенчĕç.

Çапла вара юр çине нимĕçсен 22 вилли выртса юлчĕ. Пирĕн разведчиксем пĕр аманнă нимĕç салтакне, винтовкипе пĕрлех, йăтрĕç те пĕр сухату тумасăр хамăрăннисем патне таврăнчĕç. Командовани вĕсене тав турĕ.

Кĕçех ирсĕр тăшмансен ылханлă юнлă ячĕ пĕтĕ, пирĕн çĕршыв çĕленкалтасенчен тасалĕ. Пирĕн халăх хăйĕн паттăр та хăюллă ывăлĕсене нихăçан та манмĕ, вĕсене ĕмĕрех чĕрере усрĕ.

СТЕПАН АСЛАН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—22